*Çĕнĕ кĕнеке*

# „ТУЛЛИ КАМĂЛПА"

Чăваш музыка искусствинче пирĕн вăхăтри **паллă** композиторам Филипп Миронович Дукинăн творчеетви тивĕçлĕ вырăм йышăнать. Унăн творчествипе пирĕн музыкантсемпе музыковедсем çеç мар, музыкăна юратакансем те питĕ интересленеççĕ.

Ф. Лукинăн' тĕрлĕ инструментсемпе выляма çырнă произведенисем нумай: ссрме купăсла виолончель, труба, тромбон тăта кларнет валли çырнă пьесăсем илемлĕ мелодиллĕ, вĕсене юрăсем майлă хывнă. Композитор çырнă Чăваш драма театрĕнче лартнă А. Кăлканăн «Иван Калмыков», Ф. Павлован «Ялта», Л. Родионовăн «Иăм-хĕрлĕ кўлĕ», А. Эсхелĕн «Вутлă чул» спектаклĕсенчи кĕвĕсем куракансене нумаилйха аса кĕрсе юлчĕç.

Композиторăп 600 яхăи юрăкĕвĕ: пĕччеп, хорпа юрлама çырнă произведенисем (вĕсенчен çср ытларахăшĕ шкул çулне çитмеи тата шкул ачисем валли) чăваш юрă искусствине чылай пуянлатрĕç. Вĕсенчен чылайăшĕпе хале республикăри пултарулăх коллективĕсенче усă кураççĕ.

Ф. Лукинăн юрри-кĕввисене хамăр республикăра кăна мар, çĕршыври нумай-нумай вырăнсенче тата ют çĕршывсенче те, сăмахран, Болгарире, Демократиллĕ Германи Республикинче тата Венгрире илтме пулать.

Филипп Мироновичăн республикăри тата çĕршыври маршручĕсене калаçа та пĕтереймбп. Вăл нумай çул хушши лектор, чылай статьясемпе рецензисеп авторе пулпине хамăр кулленхи пурнăçран уççăн куратпăр. Тăван музыка искусствине аталантарас тесе ĕçлет пирĕн пултаруллă композитор: çитĕпўсене мухтать, çитменлĕхсеие питлет.

**1948** çултанпа Ф. Лукин пĕр улшăнмасăр чăваш композиторĕсен организацийĕн правлени председателе. РСФСР композиторĕсен союзĕн секретариатĕнче те вăл пирен халăх музыканчĕсен тивĕçлĕ представителе шутланать.

Вăтăр çула яхăн Филипп Миронович педагогика ĕçĕпе çыхăннă: Шупашкарти Ф. П. Павлов ячĕпе хисепленекеп музыка училищинче дирижировани класие ертсе пырать. Композитор-пропагандист, обществăлла деятель çамрăк музыкантсен ăрăвне ,тĕрĕс музыкăлла-эстетикăлла воспитани нарассишĕн кулленех ырми-канми ĕçлет. Çамрăк композиторсене ĕçлеме, ўсме хавхалантарать: И. Степановпа И. Лршинова, Г. Маркияновпа Л. Андреева, Г. Митрофа ювпа çак статья авторне те кирлĕ сĕнўсем сахал мар парса композитор ĕçне-хĕлне гĕрĕс нĕркелеме пулăшрĕ.

Ф. Лукинăи пĕччен тата хорпа юрлама çырнă юрăсем нумай терĕмĕр. Сăмахран, «Салам, Мускав!», «Çамрăксен юрри», «Хăна юрри», «Туслăх юррп», «Пире парти ырлăх пачĕ». Çак юрăсемшĕн композитора **1952** çулта Государство премийĕпе палăртнă. Ку юрăсенче чăваш халăхĕн çутă ĕмĕчĕ сисĕнет, вĕсем фвлькдорпа таччăн çыхăнниие те палăртас килет.

Композитор творчестви çинчен пирĕн комиозиторсемпе музыковедсем статьясем сахал мар сырчĕç ĕнтĕ. Анчах та ку таранччеп уйрăм кĕнекен пичетленсе тухни пулманччĕ-ха. Кăçал вара çакăн пек кĕнеке тухрĕ. Çакăншăн эпир чăваш поэтне Владимир Харито?Юва чĕререп тав тăватпăр. Кĕнеке ячĕ—«Тулли кăмăлпа». Кĕиекере композитор пурнăçĕне творчествине сăнланă. Унпа пултарулăх коллективĕсен руководителĕсем тата музыка уч.ителĕсем те усă курма пултараççĕ.

Кĕнекере документлă йĕркесем нумай. Вĕсене тĕрлĕ çулсенчи хаçат-журналсенчен, композитор асаилĕвĕсенчен йĕркеленĕ.

Кĕнекепе çывăхрах паллашарха. Вăл пилĕк сыпăклă. Ф. Лукин композитор творчестви ўссе аталанни, унăн нумай енлĕ ĕçĕсем çинчен каласа пани — кĕнеке шăнăрĕ. Кĕнеке авторе вулакана документсем вĕçне çеç хăвармасть. Событисемпе фактсене ăнланмалла çыхăнтарнă, хăшпĕр документсене уçса пама автор вулаканпа калаçу пуçарать. Лукинăн эрешĕ тарăн. Çавна май кĕпеке автора художпикан шалтм туиамĕсене, тă.вап чăваш кĕтес илемлĕхĕпе совет çыннисен телейлĕ кунçулне, Ленинпа парти, комсомол тата çамрăклăх **çинчен** хывиă юрăсене тишкерсе анланма пулăшать. Çакна «Ачалăх. Вĕренў. Пирвайхи юрăсем» сыпăкра аван уçса панă. Ф. Лукин — маларах дирижер, каярахпа композитор.

«Фронта—салтаксем патне»— кĕнекен **2**-мĕш сыпăкĕ. **1941—45** çулсенчи хаяр вăрçă вăхĕтĕнче композитор творчествинчн хăйне евĕр уйрăм йĕрне туятпăр. В.Харитонов **1943** çулхи январь тата март упăхĕсенчи_«Чăваш коммуни» хаçатри хăшпĕр статьясемие паллаштарать. Ф. **Лукин** ку вăхăтра Чăваш юрăпа ташă ансамбльне ертсе пырать, фронтри салтаксем патĕнче нумай-нумай концертсемпе пулать.

«Мнрлс вăхăтра» тата «Ленин тата парти — юратнă темăсем» сыпаксепче композитор **юрри**-кĕввисене юрлакансемпе, инструмептсемпе вылякансен ячĕсемне, хăшпĕр юрăсеп историллĕ биографийĕсемпе паллашатпăр.

«Композитор-пропагандист» — пиллĕкмĕш сыпăк. Композиторăн нумай енлĕ пултарулăхпе Совет правительстви тивĕçлипе палăртать: вăл 60 çул тултарнă ятпа ăна **2**-мĕш хут Еçлсх Хĕрлĕ Ялав ордеиĕпе наградăланă.

Кĕнекере Ф. Лукин композитор произведеннйĕсенчен тунă тулли мар список та пур. Вĕсем — халăхра уйрăмах анлă сарăлнă пĕччен тата хорпа юрлама кĕвĕленĕ, тĕрлĕ инструментсемпе выляма çырнă произведенисем.

Ф. Лукин пултарулăхĕ кунранкунах аталанса пырать, вăл çĕнĕрен те çĕнĕ юрăсем парнелет. «Тулли кăмăлпа» кĕнеке вулакана чăваш музыка искусствине парăннă пултаруллă композиторпа паллаштарать, тăван юрра ытларах юратма, ăна упрама вĕрентет.

Юрий **КУДАКОВ**,
**Л. Я. Яковлев ячĕпе**
хисепленекен **Чăваш** государство
педагогика институчĕн
преподавателе.